...циональной Литературы

28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
16
ЫТЛАРИКУН
201 (6952) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Советĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАМА ТĔПЛĔН ХАТĔРЛЕНЕР!

Республикăн ялхуçалăхĕнче машинно-тракторнăй станцисем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем ăнăçлă ĕçлени вăйлă тырпул туса илме пулăшать, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетсе пыма лайăх майсем туса парать. Вăрçă çулĕсенче колхозсенче лашасен хисепĕ чылаях чакнă пирки машинăсемпе тата тракторсемпе ĕçлесе пулăшни юлса пыракан районсемпе колхозсемшĕн уйрăмах паха пулса тăчĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, республикăри МТС-сем кăçал начар мар ĕçлерĕç. Тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана республика октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех тултарчĕ. Иртнĕ çулсенчи пекех, кăçал Вăрнар, Куславкка, Шăхасан, Йĕпреç, Красноармейски, Вăрмар тата ытти МТС-сем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен çулталăкри планне 125—163 процент таран тултарчĕç. Уйрăмăнах Вăрнар МТС-ĕ лайăх ĕçленине палăртса хăвармалла. Вăл тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 163 процент, авăн çапмалли плана 147 процент, кĕрхи çĕртме тумалли плана 110 процент тултарчĕ.

МТС-сем пурте çак çӳлте асăннă станцисем пек ĕçленĕ пулсан, республика ялхуçалăх ĕçĕсене чылай ăнăçлăрах туса ирттернĕ пулĕччĕ. Анчах шăпах ĕнтĕ юлса пыракан районсенчи МТС-сем, вĕсене горючи çителĕклех парса тăнă пулин те тата ытти енĕпе сахал мар пулăшнă пулин те, кăçал начар ĕçлерĕç. Сăмахран, Пăрачкав, Кувакино, Шăмăршă, Сиява, Сурмайдан, Хĕрлĕ Чутай тата ытти чылай МТС-сем тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 67—84 процент таран кăна тултарчĕç. Шăмăршă МТС-ĕ вара авăн çапмалли плана 10.2 процент, кĕрхи çĕртме тумалли плана 0.4 процент кăна тултарнă.

Мĕнрен килнĕ-ха ку МТС-сем çав терри начар ĕçлени?

Машинно-тракторнăй станцисен директорĕсем чылай чухне горючи çителĕксĕр тесе ӳпкелешнине илтме пулать. Хăшпĕрисем тата: «запаслă пайсем çитмесçĕ» тесе, хăйсен начар ĕçне витме тăрăшаççĕ. Çак «сăлтавсене» сайра хутра кăна шута илме пулать. Пуриншĕн те паллă, Пăрачкав, Шăмăршă, Кувакино тата ытти юлса пыракан МТС-сем кăçал горючи те, запаслă пайсем те, ытти тĕрлĕ пулăшăва та малта пыракан МТС-сенчен нумайрах илнĕ. Апла пулсан, вăл МТС-сем горючипе запаслă пайсем çитмен пирки мар, хăйсем ĕçе организацилеме пĕлмен пирки, хăйсен майĕсемпе тухăçлăн усă курма пĕлмен пирки, аякран килсе пулăшасса кĕтсе ларнă пирки начар ĕçленĕ.

МТС-сене лайăх ĕçлеме чăрмантаракан сăлтавсенчен пĕри вăл—трактористсемпе ытти работниксем хушшинче ĕç дисциплини çирĕп марри пулса тăрать. Сăмахран, Чкаловски МТС малта пыракансен шутне кĕрет. Ĕç дисциплини çирĕп пулнă пулсан, çак МТС татах та лайăхрах ĕçленĕ пулĕччĕ. Анчах кунта трактористсемпе комбайнерсем хушшинче дисциплина çав тери начар. Вĕсем директори ирĕк памасăрах пĕр колхозран тепĕр колхоза куçса каяççĕ, ним сăлтавсăрах тракторсемпе комбайнсене ĕçсĕр тăратаççĕ, горючие перекетсĕр тыткалаççĕ, ĕçсе ӳсĕрĕлсе ĕçе тухманнисем те час-часах пулаççĕ е тата колхоз председателĕпе харкашса кайнă пирки ĕçе пăрахса кайнисем те пулкалаççĕ. Паллах ĕнтĕ, çаксем вĕсем МТС-сенчи ĕç дисциплинине тĕппренех çирĕплетме кирли çинчен калаççĕ.

Ĕç ăнăçлă пытăр тесен, МТС директорĕн кашни бригадăпа кашни трактор тата кашни комбайн мĕнле ĕçленине тĕплĕн пĕлсе тăмалла, вĕсене куллен ĕçлĕ кăтартусем парса тăмалла, çакăн чухне вара юлса пыракан участоксем çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Тĕрĕссипе илсен, шăпах ĕнтĕ юлса пыракан колхозсенче ялан тенĕ пекех тракторсемпе комбайнсем начар ĕçлеççĕ, вĕсене МТС директорĕсем пачах та çителĕксĕр пулăшса пыраççĕ. Чăваш АССР Наркомземĕ пирки те çавнах каламалла: вăл та юлса пыракан районсенчи МТС-сене тивĕçлипе ертсе пымасть-ха.

МТС-сен ĕç пахалăхĕ пирки уйрăмăнах чарăнса тăни кирлĕ. Нумай МТС-сенче плана хисеп енĕпе тултарассишĕн кăна тăрăшаççĕ, çав вăхăтрах ĕçĕн пахалăхĕ çине пачах та тенĕ пекех çавăрăнса пăхмаççĕ. Авăн çапнă чухне тырпула улăмпа пĕрле нумай тăккаласа хăвараççĕ, кĕрхи çĕртме тунă чухне шăйрăксем нумай юлаççĕ е ăшăх сухалаççĕ, акнă чухне те ĕçе лайăх тăвас тесе тăрăшмаççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсене Первомайски, Чкаловски, Шупашкар тата ытти районсенче те курма пулать. Çакна пула вара колхозсем тырпул сахалтарах пухса илеççĕ. МТС руководителĕсемпе трактористсем тата комбайнерсем çакна ăнланса илме тивĕçлĕ: ĕçе начар туни, çапла вара тырпул тухăçлăхне чакарни пирĕн колхозсене тата пĕтĕм çĕршыва пысăк сиен кӳрет, çавăнпа та МТС работникĕсем хушшинче ĕçе лайăх тăвас енĕпе чăн-чăн кĕрешӳ пуçарса ямалла.

Халĕ колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Килес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ пуçланать. Пирĕн МТС-сем килес çул тата ăнăçлăрах ĕçлесси машинăсемпе тракторсене вăхăтра тата тĕплĕн юсаса хатĕрленинчен килет. Машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕнче çӳлте асăннă çитменлĕхсем ан пулччăр тесен, машинăсемпе тракторсене тĕплĕн юсаса хатĕрлес тесен, кĕркуннехипе хĕллехи юсав кампанине тивĕçлипе кĕтсе илни кирлĕ.

Машинăсемпе тракторсене юсама тытăнас вăхăт çывхарса çитрĕ ĕнтĕ. Анчах юсав ĕçне хатĕрленес тĕлĕшпе чылай МТС-сенче халĕ нимĕнех те туман-ха. Вăрнарпа Улатăр МТС-ĕсем кăна машинăсемпе тракторсене юсама мастерской çурчĕсене хатĕрлесе çитернĕ. Сурмайдан, Сиява, Калинино, Октябрьски тата Канаш МТС-ĕсем халиччен те мастерской çурчĕсене юсаса пĕтермен, машинăсене усрама сарайсем хатĕрлемен. Çавăн пекех тракторсемпе ытти машинăсене юсамалли оборудованисене, тĕрлĕ станоксене юсаса хатĕрлес ĕç те пачах çителĕксĕр пулса пырать. Мастерскойсем валли вутă, тимĕрçĕ лаççисем валли кăмрăк хатĕрлесе турттарса тухас тесе республикăри нумай МТС-сем начар тăрăшаççĕ. Çавна пула республикăри МТС-сенче вутă планпа пăхнă 7.300 кубометр вырăнне 500 кубометр кăна, кăмрăк 225 тонна вырăнне 61 тонна кăна хатĕрлесе хунă. Мастерскойсемпе машина сарайĕсене туса лартассине хăвăртлатма МТС директорĕсене ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем те çителĕксĕр пулăшса пыраççĕ.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама хатĕрленес ĕçри çак çитменлĕхсене халех пĕтерес пулать. Нумаях та пулмасть ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ку ыйтăва пăхса тухса, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе МТС директорĕсене çирĕп кăтарту парса хăварчĕ. Машинăсемпе тракторсене юсамалли мастерскойсен çурчĕсене çак кунсенчех туса çитермелле, вĕсене ăшă тытакан тумалла. МТС-сем çумĕнчи столовăйсен ĕçне йĕркелесе ямалла, тĕрлĕ станоксемпе инвентарьсене, двигательсене юсаса çитермелле, мастерскойсене электричество çутти кĕртмелле, вутă тата кăмрăк çулталăкра кирлинчен 40 процент чухлĕ хатĕрлесе хумалла, юсав ĕçне туса пыма кирлĕ кадрсене тупса çитермелле,—çакăн пек задачăсем тăраççĕ халĕ МТС директорĕсемпе парторганизацисем умĕнче. Çак ĕçсене пурне те план тăрăх туса пымалла, машинăсемпе тракторсене юсама мĕн кирлине халех тупса çитермелле, çапла вара юсав ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле.

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ОКТЯБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

МТС-сем	Çулталăкри плана тултарнă	Кĕрхи çĕртме тунă	Авăн çапнă
Вăрнар	163,3	110,3	147,0
Куславкка	140,6	100.9	54,1
Шăхасан	139,2	82,5	45,5
Йĕпреç	130,3	53.3	67,7
Красноармейски	125,1	100,2	52,3
Вăрмар	125,0	70,0	104,0
Канаш	124,3	32,4	50,2
Çĕрпӳ	123,5	105,5	59,5
Ишлей	123,0	93,7	34,4
Елчĕк	120,6	106,6	56,6
Чкаловски	115,0	53,8	83,0
Комсомольски	110,9	5,8	51,7
Калинино	110,1	107,0	62,0
Первомайски	102,6	54,5	38,4
Шупашкар	100,9	87,3	40,0
Улатăр	100,2	45,2	62,2
Сĕнтĕр	96,5	80,8	19,6
Элĕк	95,7	29,2	61,7
Тăвай	94,3	18,8	35,5
Сĕнтĕрвăрри	89,2	82,3	22,1
Çĕмĕрле	88,1	15,6	32,6
Етĕрне	87,4	74,1	45,3
Октябрьски	87,0	83,0	10,1
Хĕрлĕ Чутай	84,2	13,1	14,5
Сурмайдан	78,6	2,0	28,4
Сиява	75,4	13,0	57,0
Шăмăршă	74,8	0,4	10,2
Кувакино	74,6	8,0	41,8
Пăрачкав	67,7	28,6	58,7

ШЫВ ВĂЙĔПЕ АВĂН ÇАПАÇÇĔ

Йĕпреç районĕнчи «Смычка» колхозра турттăм вăйĕ тĕлĕшпе чылай пысăк йывăрлăхсем пулнă. Çакна шута илсе, кунта шыв вăйĕпе авăн çапассине организациленĕ. Шыв арманĕ çывăхне йывăçран маховик туса лартнă. Çак маховика молотилка барабанĕпе çыхăнтарнă. Пĕчĕк тăрăх пыракан шыв маховика вăрать, маховик молотилкăна ĕçлеттерет. Çапла вара кунта шыв вăйĕпех авăн çапаççĕ. Колхоз паян-ыран авăн çапса пĕтерет. Çавăн пекех «Искра» колхозра та авăн çапнă çĕрте шыв вăйĕпе усă кураççĕ.

«Строитель», «Красный металлист», «Новая жизнь», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче те авăн çапнă çĕрте шыв вăйĕпе усă курма май пур. Анчах та вĕсем «Смычка» колхозăн паха пуçарăвне илмен-ха.

П. КУРАКОВ.

ГОСУДАРСТВĂНА ÇĔРУЛМИ ПАРСА ТАТНĂ

Калинино районĕнчи Талхирти «Пионер» колхоз (председателĕ Е. Иванов юлташ) октябрĕн 2-мĕшĕ тĕлне çĕрулми кăларса пĕтерчĕ, октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна пĕтĕмпех парса татрĕ. Колхоз паян-ыран авăн çапса пĕтерет. Государствăна тырă парса татнă, халĕ Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе параççĕ.

Д. ПЕТРОВ.

Ăмăрту вăй-хăвачĕ

СОВЕТСКОЕ. (Хамăр корр.). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Элешкушкĕнчи «Труд» колхоз членĕсем мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçласа пыма сăмах панăччĕ. Вĕсем илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕç.

Колхоз уйри тырпула планпа пăхнинчен чылай малтан вырса пĕтерчĕ. Кĕлтесене вăхăтра итем çине кĕртсе çитерчĕ. Халĕ авăн çапасси хĕрӳллĕн пырать. Молотилкăпа кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе, авăна çак кунсенчех çапса пĕтереççĕ. Вăрлăхлăх клевера та вăхăтра çапса тирпейлесе хунă. Кантăр çурăмĕсене шыва хутса кăларнă, типĕтсе тылланă тата государствăна 8,67 центнер сӳс панă.

Çĕрулмине тахçанах кăларса пĕтернĕ ĕнтĕ. Ăна колхозшăн тата колхозниксемшĕн государствăна парса татнă хыççăн, колхозниксене аванс шучĕпе кашни ĕçкунĕ пуçне 4-шар килограмм валеçсе панă. Çĕрулмине вăрлăхлăх та, выльăхсене çитерме те çителĕклĕ уйăрса, лайăх подвалсене хывнă.

Колхоз пирвайхи тивĕçе вăхăтра пурнăçларĕ—государствăна тырă парса татрĕ. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне чылай тырă панă.

Кĕрхи çĕртме планне тултарнă. П. Скворцов, М. Иванова, В. Калашников, В. Афанасьев сухаçăсем кулленхи нормăран ирттерсе сухаланă. Çавăншăн вĕсене ĕçкунĕ хушса тӳленĕ.

Колхоз кăçал тухăçлă пахчаçимĕç туса илчĕ. Купăста, хăяр, помидор, хĕвелçаврăнăш, кишĕр, ыхра сутса чылай тупăш илнĕ. Çырла сутнипе кăна 17.000 тенкĕ тупăш илнĕ. Пахчаçимĕçне ĕçкунĕ тăрăх та валеçсе панă.

Выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕл валли пур енчен те хатĕрлесе çитернĕ. Ку ĕçе колхоз председателĕ И. Григорьев хăй пуçарса ертсе пычĕ. Витесене юсанă, шăтăк-çурăксене питĕрнĕ, çийĕсене витнĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли апат та çителĕклĕ. 118 тонна силос хывса плана пĕтĕмпех тултарнă.

Хальхи вăхăтра «Труд» колхоз членĕсем ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн тимлесе тăрăшаççĕ. Ĕçе хутшăнман колхозниксем пачах çук.

Яков СИГАЙ.

Лайăх ĕçлекен комбайнер

Иван Иванович Михайлов — Çĕмĕрле МТС-ĕн чи лайăх комбайнерĕ. Вăл кашни çулах тырă вырса пухмалли плана ытлашшипех тултарать.

Кăçалхи çул та Михайлов «Новая жизнь» колхоз хирĕнче пĕр чăрăнмасăр ĕçлерĕ. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вăл плана тăватă хут ирттерсе тултарчĕ — 345 гектар тырă вырса пухрĕ.

Михайлов хăйĕн комбайнне вăхăтра тата питĕ тĕплĕ юсать, ĕçре кĕтмен çĕртен пулма пултаракан чăрмавсене сирме тăрăшать.

Çултан çулах лайăх ĕçленĕшĕн Михайлов комбайнера кăçал СССР Верховнăй Совет Президиумĕ «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе наградăланă. Кунсăр пуçне унăн кăкăрне «Мастер комбайновой уборки» тата «Отличник социалистического сельского хозяйства» значоксем илемлетсе тăраççĕ.

Халĕ Михайлов авăн çапать.

Авăн çапнă хушăрах Михайлов юлташ комбайнăн выракан пайне—хедера юсаса пĕтернĕ.

Ан. ТАНЬКОВ.

Фронтовиксем колхоз ĕçĕнче

ЧКАЛОВСКОЕ. Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пыхăнманлăхĕшĕн Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче паттăррăн çапăçнă воинсем колхоз производствинче те пултаруллăн ĕçлеççĕ. «Маяк» колхоза Хĕрлĕ Çартан 11 фронтовик таврăннă. Вĕсем пурте киле таврăнсан иккĕмĕш куннех колхоза ĕçлеме тухнă. «Çак хĕрӳ тапхăрта—сĕнтерӳ тырпулне пухса кĕртнĕ вăхăтра епле килте чăтса ларатăн», тенĕ вĕсем. Çартан таврăннă Алимзян Сабирзянов кĕреплеллĕ çавапа тырă çулса кулленхи задание 150—160 процент тултарса пынă. Вăл киле таврăннăранпа пĕр кун та ĕçрен юлман. Çак тарана çитсе вăл колхозра 118 ĕçкунĕ тума ĕлкĕрнĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри фронтовик Лазарь Краснов çартан таврăнсанах çĕмелсемпе капансем тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнчĕ. Лайăх ĕçленине кура колхозниксем ăна бригадира лартрĕç. Вăл ертсе пыракан бригада тырпул пухса кĕртес ĕçсене ытти бригадăсенчен малтан туса пĕтерчĕ. Хăйĕн бригадинчи колхозниксемпе вăл кая юлса пыракан кӳршĕри колхоза тырă вырса пулăшрĕ.

Орденоносец Иван Крылов «Гвардеец» колхозра двигатель çинче механик пулса ĕçлет. Çавăн пекех «Броневик», «Осоавиахим», «Герой» тата ытти колхозсенче те Хĕрлĕ Çартан таврăннă воинсем пысăк пултарулăхпа ĕçлеççĕ.

Хĕрлĕ Çартан таврăннă воинсем хăшпĕрисем ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Акă, фронтовик Закиров юлташ Тутар Тимеш ял Совет председателĕнче, Хĕрлĕ Çара кайиччен райфо бухгалтерĕнче ĕçленĕ Александр Хохлов райфо заведующийĕнче ĕçлеççĕ.

ВКП(б) райкомĕпе пуçламĕш парторганизацисем фронтовиксен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тата вĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçленисĕр пуçне, вĕсемпе валли политика ыйтăвĕсем тăрăх часчасах каласусем ирттереççĕ. Нумаях пулмасть ВКП(б) райкомĕ Хĕрлĕ Çартан таврăннă воинсен районри канашлăвне ирттерчĕ. Канашлура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ С. Никитин юлташ «Районри ĕçсыннисен Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем çинчен тата мирлĕ строительство тапхăрĕнчи задачăсем çинчен» доклад туса пачĕ. Канашлура пурĕ 9 çын тухса каларĕç, вĕсем пурте Тăван çĕршывăн вăйхăватне ӳстерессишĕн фронтри пек паттăррăн ĕçлеме сăмах пачĕç.

ХАРИТОНОВ,
ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

Ӳнерчĕн ӳкерчĕк : пирĕн чаплă земляк—Совет Союзĕн Геройĕ **И. М. Федоров.**

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

СССР Транспорт машиностроенийĕн Пĕтĕм Союзри Халăх Комиссариатне тăвасси çинчен

1. Танк промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕпе унăн предприятийĕсене, Йывăр машиностроени Халăх Комиссариачĕн паровозсем тăвакан завочĕсене тата Вăтам машиностроени Халăх Комиссариачĕн вагонсем тăвакан завочĕсене пĕрлештерсе, СССР Транспорт машиностроенийĕн Пĕтĕм Союзри Халăх Комиссариатне тăвас.

2. Танк промышленноçĕн Халăх Комиссариатне пĕтерес.

3. СССР Транспорт машиностроенийĕн Халăх Комиссариатне СССР Совнаркомĕ çирĕплетсе панă списокра кăтартнă предприятисемпе организацисене парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

В. А. Малышев юлташа СССР Транспорт машиностроенийĕн Халăх Комиссарĕ пулма лартасси çинчен

Вячеслав Александрович Малышев юлташа СССР Транспорт машиностроенийĕн Халăх Комиссарĕ пулма лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕ.

ТАСС ХИРĔÇЛЕСЕ КАЛАНИ

Çак кунсенче Америкăри хаçатсенче çакăн пек пĕлтерӳ пичетленсе тухрĕ: виçĕ держава руководителĕсен Берлинри конференцийĕнче Дарданел проливне мĕнпур çĕршывсем усă курмалли пролив туса хумашкăн Монтрери конвенцие улăштарасси çинчен çав правительствăсенчен кашнийĕ Турци правительствипе уйрăммăн калаçмалла тесе калаçса татăлнă пулать.

ТАСС авторитетлă учрежденисенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, çав пĕлтерӳ тĕрĕсех мар. Тĕрĕссипе Берлинри конференцире çапла калаçса татăлнă: проливсем пирки Монтрере тунă конвенцие улăштармалла, мĕншĕн тесен вăл хальхи вăхăтри условисене килĕшсе тăмасть, çак ыйту пирки виçĕ правительствăран кашнийĕ Турци правительствипе хăй уйрăм калаçмалла.

ÇĔНÇĔРЕ КУÇАРАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН УПРАВЛЕНИ ТУНИ

РСФСР Совнаркомĕ çумĕнче çĕнçĕре куçарас тĕлĕшпе ĕçлекен управлени тунă. Вăл çĕр сахал вырăнти районсенчен колхозсене, колхозниксемпе уйрăм хресченсене çĕр нумай çĕре куçарас ĕçе ертсе пырать. Çĕнçĕре куçарас тĕлĕшпе ĕçлекен управлени çавăн пекех тата çынсене куçарса каяс, вĕсене çĕнĕ вырăнта йышăнас тата нимĕç фашисчĕсем урăх çĕршывсене хăваласа кайнă совет гражданĕсене йышăнса пулăшу парас тĕлĕшпе те ĕçлет.

Автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсем çумĕнче тата крайсемпе облаçсен исполкомĕсем çумĕнче çĕнçĕре куçарас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсем тăваççĕ.

(ТАСС).

КОЛХОЗСЕМ ВАЛЛИ СЕПАРАТОРСЕМ

Куйбышев хулинчи пĕр заводра колхозсем валли пĕчĕк сепараторсем туса кăларма тытăннă. Çав сепараторсем сехетре 100 литр сĕтĕн хăймине уйăрса илме пултараççĕ. Кăçал çавăн пек виçĕ пин сепаратор туса кăлармалла. (ТАСС).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

СОВЕТ СОЮЗĔН ТУЛАШĔНЧЕ ТĂРАКАН ХĔРЛĔ ÇАРПА ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔН ЧАÇĔСЕМПЕ СОЕДИНЕНИЙĔСЕНЧИ ÇАР ÇЫННИСЕМ СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТНЕ СУЙЛАС ĔÇЕ ХУТШĂНАССИ ÇИНЧЕН

СССР Конституцийĕн 138-мĕш статьинче Хĕрлĕ Çарта тăракан граждансем СССР ытти гражданĕсемпе пĕртанах суйлама тата суйланма пултарни çинчен каланине шута илсе тата СССР тулашĕнче тăракан Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн чаçĕсемпе соединенийĕсенчи çар çыннисем СССР Конституцийĕнче кăтартса панă суйлав правине пурнăçа кĕртме пултарччăр, Совет Союзĕн государство влаçĕн чи аслă органне суйлас ĕçе хутшăнччăр тесе, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

СССР тулашĕнче тăракан Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн чаçĕсемпе соединенийĕсенчи çар çыннисем СССР Верховнăй Советне уйрăм суйлав округĕсенче суйламалла, çав суйлав округĕсене кашни çĕр пин суйлавçă шучĕпе тумалла, вара кашни суйлав округĕнчен Союз Советне пĕр депутат, Национальноçсен Советне пĕр депутат суйламалла.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕ.

ШКУЛСЕНЧИ ВĔРЕНӲ ÇУЛĔН ПĔРРЕМĔШ ЧĔРЕКЕ

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ В. П. Потемкин юлташ халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен вырăнти органсене çакăн пек кăтарту панă: пур классенче те, вĕсенче вĕрентме хăçан тытăннине пăхмасăрах, вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш чĕрекне ноябрĕн 6-мĕшĕнче пĕтермелле. Октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçланă классенче вĕренекенсене аттестовать тумалла мар, вырăс чĕлхипе тата математикăпа пĕрремĕш чĕрĕк пĕтнĕ чух çырса памалли ĕçсене çырмалла мар.

Украинăна ирĕке кăларнă ятпа пулса иртнĕ чаплă лару

КИЕВ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Украинăна нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă ятпа Киевра парти, совет тата обществăллă организацисен чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта çар чаçĕсен представителĕсем, стахановецсемпе интеллигентсем пулнă.

«Украина хуçалăха юсас тĕлĕшпе тунă малтанхи çул итогĕсем тата малашнехи задачăсем çинчен» УССР Совнаркомĕн председателĕ тата Украинăри КП(б) Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Хрущев юлташ доклад туса панă.

— Украина халăхĕн историне 1944 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕ ĕмĕр манми кун пулса кĕрсе юлать,—тенĕ Хрущев юлташ.—Çак вăхăт тĕлне Украинăн мĕнпур территорине нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатса пĕтернĕ.

Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвне пула, пирĕн Совет правительстви тата Сталин юлташ ертсе пынине пула, Украина халăхне пĕрлештерсе пĕр государство туса хурас ĕмĕрхи ĕмĕт кăçал пурнăça кĕчĕ. Совет правительствипе Чехословаки тунă договор тăрăх, Карпат леш енчи Украина халĕ Украина ССР-ĕн составне кĕрет.

Вăрçăн чи йывăр çулĕсенче те Украина халăхĕ тăшмана хирĕç активлăн кĕрешрĕ. Пирĕн халăх пире пулăшма аслă вырăс халăхĕ тата хăватлă Совет Союзĕнчи ытти халăхсем те килессине пĕлсе тăчĕ.

Совет халăхĕн тăшманĕсем пирĕн ĕмĕрхи туслăха аркатса яма темиçе хутчен те хăтланса пăхрĕç. Анчах та Украина халăхĕпе вырăс халăхĕн туслăхĕ, совет халăхĕсен туслăхĕ ĕмĕрне те арканмĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланнă Украина ĕçсыннийĕсем аслă вырăс халăхĕнчен тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсенчен те тăванла пулăшу илсе тăрса, нимĕç фашисчĕсем аркатса хăварнă халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ.

Донбасс шахтисем пирĕн çĕршыва 40 миллион тонна ытла кăмрăк пачĕç. Украинăри металлурги завочĕсем 1926 çулхи чухлĕ продукци туса кăларма тытăнчĕç. 21.000 километр тăршшĕ çула юсаса пĕтернĕ. Хуласене юсас тĕлĕшпе те, пурăнмалли çуртйĕрсемпе коммунальнăй предприятисене юсас тĕлĕшпе те чылай пысăк çитĕнӳсем тунă. 1945 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Украинăри хуласенче пурăнмалли çуртйĕрсене 7 миллион тăваткал метра яхăн юсанă, колхозниксен 96.000 çуртне юсанă е çĕнĕрен тунă.

Вăрçăччен хипе танлаштарсан, Украинăра акмалли çĕр лаптăкне 74 процента çитернĕ, вăл шутра тĕштырă культурисем акмалли çĕр лаптăкĕ 82 процент йышăнса тăрать. Украинăн уйрăм районĕсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăнах колхозниксемпе ĕçхресченĕсем ялхуçалăхне юсаса ура çине тăратма, Хĕрлĕ Çарпа халăха ялхуçалăх продукчĕсем парса тăма тытăнчĕç. Иртнĕ çулта обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тĕлĕшпе те питĕ пысăк ĕç тунă.

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсене юсаса ĕçе ярас тĕлĕшпе те нумай ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра Украинăра 27 248 шкул ĕçлет. Çав шкулсенче 5 миллион çын ытла вĕренет. 150 аслă шкула, 474 техникума юсаса ĕçе янă. Украинăра халĕ 852 хаçат тухса тăрать.

Украина хулисемпе ялĕсенче вăрçăччен 130 театр пулнă, халĕ вĕсенчен 99 театра уçнă. 1510 киноустановка, 823 радиоузел, 1466 библиотека уçнă.

Украинăна фашистла оккупантсенчен ирĕке кăларнă хыççăнхи çулталăк хушшинче Украина халăхĕ Гитлерăн шанчăклă тарçисене — Украина националисчĕсене аркатса тăкрĕ. Вĕсем ирĕклĕхе юратакан Украина халăхне нимĕç фашисчĕсен чури туса хума хăтланчĕç. Анчах та Украина халăхĕ вĕсен пĕр сăмахне те илтмерĕ, вĕсене—нимĕç фашисчĕсен агенчĕсене—тăрă шыв çине кăларса пычĕ.

Рабочисемпе колхозниксен, интеллигенцин, мĕнпур совет халăхĕн татах та питĕ нумай ĕçлеме тивет. Халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратасси, ĕçсыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатасси рабочипе колхозник, интеллигент тăрăшса ĕçленинчен килнине кашни çын лайăх пĕлсе тăрать.

Халĕ СССР Верховнăй Советне суйламалли вăхăт çывхарса килет. Çав суйлавра пирĕн çĕршыври нумай нацилллĕ халăх хăй большевиксен партийĕ, Сталин юлташ тавра пĕтĕçнине кăтартса парĕ. Совет Украининчи ĕçсыннисем çак историллĕ куна татах та çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илĕç.

Паян, Совет Украинине ирĕке кăларнă кун, Украина халăхĕ паттăр Хĕрлĕ Çара, большевиксен аслă партине, аслă учительпе çулпуçа тата полководеца Совет Союзĕн Генералиссимусне аслă Сталина чĕререн тав тăвать.

Хрущев юлташăн юлашки сăмахне нумайччен алă çупса хапăл тăваççĕ. Сталин юлташ патне çыру яма сĕннине хĕрӳллĕн алă çупса йышăнаççĕ.

Чаплă ларура Украинăна ирĕке кăларнă Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене, сержанчĕсене, офицерĕсене, генералĕсене, маршалĕсене хĕрӳллĕн тав туса саламсем янă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ, республикăри пурăнмалли çуртйĕр тата коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çаксем мала тухнине палăртнă:

Канашри ассенизаци обозне социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме пĕрремĕш преми—3.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Çĕмĕрлери Колхозник çурчĕ уйăхри плана 220 процент, тупăш илмелли плана 243 процент тултарнă. Çĕмĕрлери Колхозник çуртне социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме иккĕмĕш преми—2.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Сентябрь уйăхĕнче Канашри Колхозник çурчĕ, Шупашкарти хула канализацийĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

Аслă уява ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ

Елчĕкри крахмал завочĕ хăй вунă çул ĕçлене вăхатра çерулмирен халăха кирлĕ апат-çимĕç чылай туса кăларнă. Завод уйрăмах Отечественнăй вăрçа çулĕсенче лайăх ĕçленĕ. Вăрçă çулĕсенче вăл хăйне панă плансемпе заданисене срокра тата ытлашшипех тултарса пынă. Иртнĕ çулхи плана 165 процент тултарнă.

Завод кăçал та хăвăртлăхсене чакармасăр ĕçлет: кăçалхи пĕрремĕш çурçул планне 185 процент тултарнă. Çавăншăн РСФСР апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн премине илме тивĕçлĕ пулнă.

Апат-çимĕç промышленность предприятийĕсем хушшинчи социализмлă ăмăртура мала тухни завод коллективĕн ĕçлес кăмăлне татах та çĕклентернĕ. Август уйăхĕнче завод планпа пăхнинчен 10 хут ытларах продукци туса кăларнă. Уйрăмах типĕтнĕ крахмал тумалли задание ăнăçлă пурнăçланă.

Елчĕкри крахмал завочĕ Первомайскри заводпа ăмăртса ĕçлет. Ăмăртура Елчĕк завочĕ малта пырать. Иртнĕ уйăхра елчĕксем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Ăмăртăвăн малтанхи кунĕсенчех вĕсем аслă уява ĕçри çитĕнӳпе кĕтсе илме хатĕрленнине кăтартрĕç. Завод çак уйăхри плана малтанхи 10 кун хушшинчех 70 процент тултарчĕ.

Кунта социализмлă ăмăртăва кашни бригада, кашни рабочипе работница хутшăннă. Хальхи вăхăтра крахмал тăвакан З. Выйгитовăпа А. В. Иванова бригадисем тухăçлă ĕçлеççĕ.

Завод коллективĕ хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тунă. Çурт-йĕрсене юсанă, алăксене ăшă тытмалла тунă, кăнтăксем лартнă, вутă хатĕрленĕ. Подсобнăй хуçалăхран начар мар тырпул, пахчаçимĕç пухса кĕртнĕ. Кунта 95 сысна, 8 лаша, 2 тиха усраççĕ. Рабочисем валли столовăй ĕçлет.

Елчĕкри крахмал заводне опытлă директор И. А. Горшков юлташ ертсе пырать. Вăл апат-çимĕç промышленность ĕçĕнче 14-мĕш çул ĕçлет. Лайăх ĕçленĕшĕн правительство ăна «За трудовое отличие» медаль, СССР Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕ «Отличник соцсоревнования» медаль парса наградăланă.

Т. ИВАНОВ.

Юлашки почтăран

Валгазпа Сидпуд

Çак сăмахсем мĕне пĕлтернине ăнланас тесен, Вăрнар районĕнче тухакан «Социализм çулĕпе» хаçата вуласа пăхас пулать. Тӳрех каласан, ку хаçат начар мар тухать. Лайăх ĕçлекен районра хаçат начар тухни килĕшӳсĕр пулнă пулĕччĕ. Анчах хаçатăн лайăх енĕсем çинчен эпир тепĕр чухне каласа парасшăн. Халĕ çӳлте асăннă сăмахсем пирки чарăнса тăрăпăр.

Партин Центральнăй Комитечĕ кăтартса панă тăрăх, районри хаçатра пуринчен ытла авторсен çырăвĕсем пичетленмелле, редакци работникĕсем хăйсем сахал çырмалла. Çакна Вăрнар районĕнчи хаçатăн редакторĕ Шахалов юлташ ăнланать. Çапах та ăна пурнăçа кĕртсе пымасть. Пĕр хаçатрах темиçе çĕрте «Шахалов» тесе алă пусма аван мар пирки, вăл тĕрлĕ псевдонимсем шухăшласа кăларать. Хаçатăн юлашки страницинче вăл «В. П. Шахалов» тесе алă пусать, пĕрремĕш страницăра е хаçат варринче вара «В. Алгазин» тесе çырать. Юлашки вăхăтра вăл тата тепĕр хушамат шухăшласа кăларчĕ: «Валгаз» тесе çырма тытăнчĕ. Редактора курă, районри хаçатăн ытти сотрудникĕсем те парăмра юлмаççĕ. Сăмахран, пĕр хаçатрах вулакан «С. Пудаков» е «Сидпуд» тесе алă пуснине курать пулсан, вăл пĕр юлташах—Пудаков юлташ пулать.

Çапла Валгазпа Сидпуд пĕр заметка çырнă. Сентябрĕн 18-мĕшĕнче районри хаçат редакцине Кăмашри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн директорĕ П. Якимов юлташ пырса кĕнĕ. Пуçланнă вара допрос. Допрос хыççăн Валгазпа Сидпуд редакцине пынă хăна çинчен пысăк заметка çырса кăларнă: пĕр цифрăна маннăшăн Якимов юлташа хĕнемеллипех хĕнесе тăнă.

Асăрханăр, Вăрнар районĕнчи юлташсем: районри хаçат редакцине пырас пулсан, цифрăсене ан манăр!

Вăрнар районĕнчи хаçатра ĕçлекенсен кăртăнлăхне усса парса, эпир вĕсене çакна асăрхаттарасшăн: улшăнса-улшăнса пынăсемĕн сирĕн хушаматăр ытла та кулăшла пулса ан кайтăр, унсăрăн тата чăннипех те «Сидпуд юлташ» тесе чĕнме тытăнĕç.

Финанс работникĕсен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвĕ

Чăваш АССР-ĕнчи финанс работникĕсен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвĕ пуçланни икĕ эрне иртрĕ. Пирĕн республикăри нумай районсем III-мĕш кварталти финанс планне тултараймарĕç, çавăнпа та çак ăмăрту çавăн пек районсенчи финанс работникĕсем умне çав тери пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Чи малтанах, Октябрь уйăхĕнче государство дохочĕсем тăрăх пухса пĕтермен укçа-тенке пухса пĕтермелле, район бюджетĕнчен ĕçукçи илекен пур работниксене те Октябрь уявĕччен ĕçукçи пĕтĕмпех тӳлесе татмалла. Районсем пĕлтернĕ тăрăх, учительсене, медицина работникĕсене тата ытти работниксене те августпа сентябрь уйăхĕсемшĕн 3 миллион тенке яхăн ĕçукçи тӳлемелле. Кунсăр пуçне, ача çурчĕсене, педучилищĕсене, больницăсене т. ыт. учрежденисене те çителĕклĕ таран укçа-тенкĕ парса тăраймаççĕ. Çакăн пек парăмсем пуррин сăлтавĕ ĕнтĕ чылай районсем III-мĕш кварталти укçа-тенкĕ пухмалли плана тултараймацци пулса тăрать. III-мĕш кварталта республикăра 20 миллион тенкĕ ытла пухайман. Предприятисемпе хуçалăх наркомачĕсем бюджета миллион тенкĕ ытла паман, оборотран илекен налога 8 миллион тенкĕ пухса çитереймен.

Çапла, сăмахран, III-мĕш кварталти финанс планне Хĕрлĕ Чутай районĕнче—27,3 процент, Çĕмĕрле районĕнче—39,1 процент, Кувакино районĕнче—42,6 процент, Пăрачкав районĕнче—45,7 процент, Первомайски районра — 45,9 процент, Советски районра — 48,8 процент, Чкаловски районра—50,3 процент, Комсомольски районра—52,6 процент, Йĕпреç районĕнче — 55,6 процент çеç тултарнă.

Çав вăхăтрах III-мĕш кварталти финанс планне Çĕрпӳ районĕнче — 132,6 процент, Сĕнтĕрвăрри районĕнче—117,7 процент, Вăрмар районĕнче—112,2 процент, Муркаш районĕнче — 107,6 процент, Октябрьски районра—100,8 процент, Шупашкар хулинче—105,4 процент тултарнă.

Финанс планне тултармалли условисем ытти районсенче те пулнă. Анчах та районри финанс пайĕн заведующийĕсем, налог инспекторĕсемпе агенчĕсем тата Госстрах инспекторĕсем тăрăшса ĕçлеменнине пула финанс планне тултарайман.

Финанс планне тултарайманнишĕн район руководителĕсемпе ял Совет председателĕсем те айăплă. Вĕсем «халĕ тырпул пухса кĕртмелле, финанс тĕлĕшпе ĕçлеме вăхăт çук, ăна кайран та тума ĕлкĕрĕпĕр-ха» тесе ларса, финанс работникĕсен ĕçне ертсе пыман, вĕсене тивĕçлĕ пулăшу паман, хăшпĕр çĕрте тата районри финанс пайĕн заведующийĕсемпе вĕсен заместителĕсене колхозсене уполномоченнăйсем туса янă та мĕн квартал пĕтиччен çавăнта тытса усранă. Çакна пула вара финанс работникĕсемпе налог агенчĕсем хăйсем пĕлнĕ пек ĕçлесе пынă, контроль çуккине кура, тепĕр чухне пачах та ĕçлемен. Налог инспекторĕсем те хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пыман, налог агенчĕсене пулăшу паман, тĕрлĕрен парăмсене тӳлессинчен пăрăнакан çынсенчен вăйпа шыраса илес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

Нумай районсенче III-мĕш кварталта финанс планне тултарманнине çакăнпа çеç ăнлантарса пама пулать.

Социальнăй тата культура учрежденийĕсенче ĕçлекен работниксене августпа сентябрь уйăхĕсемшĕн ĕçукçи тӳлемелли парăмсем Первомайски районра—258.000 тенкĕ, Çĕмĕрле районĕнче—158.000 тенкĕ, Пăрачкав районĕнче—149.000 тенкĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнче—129.000 тенкĕ, Вăрнар районĕнче—162.000 тенкĕ, Улатăр районĕнче—153.000 тенкĕ, Чкаловски районра—123.000 тенкĕ, Шупашкар районĕнче — 165.000 тенкĕ шутланаççĕ. Çак районсенче пухман налог тӳлевĕсене, страховка тӳлевĕсене тата заемшăн миллионшар тенкĕ пухмалла. Паллах, ĕçукçи тĕлĕшпе çакăн пек пысăк парăма кĕрсе кайнишĕн районри финанс пайĕн заведующийĕсем тата районри советсен исполкомĕсем ответлă пулаççĕ. Çав районсенчи прокурорсем работниксене ĕçукçи вăхăтра тӳлеменшĕн никама та суда парса ответ тыттарман. Çакăн пек сиенлĕ йăласене яланлăхах пĕтермелле, ĕçукçине вăхăтра тӳлемелле. Чăваш АССР-ĕн 1945 çулхи бюджечĕпе палăртнă мероприятисене тумашкăн вăхăтра укçа-тенкĕ парса тăмалла.

Октябрĕн 12-мĕшĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕнче Советски район Совечĕн исполкомĕн председателĕ Малинин юлташ районра финанс планне тултарас ĕç мĕнле пыни çинчен доклад туса пачĕ. Советски районра III-мĕш кварталти финанс планне 48,9 процент çеç тултарнă, вăл шутра налогсен тӳлевĕ тĕлĕшпе 33,8 процент тултарнă. IV-мĕш кварталăн планне те вунă кун хушшинче 5,5 процент çеç тултарнă. Налогпа страховка тӳлевĕсене пухас тĕлĕшпе, заемшăн укçа пухас тĕлĕшпе пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Августпа сентябрь уйăхĕшĕн учительсемпе медицина работникĕсене 72.000 тенкĕ ĕçукçи тӳлемелле. Асламас ял Советĕнчи налог агенчĕ Сергеева юлташ, çавăн пекех тата ял Совет председателĕ те, колхозсен председателĕсемпе бригадирсем те, ял Совечĕн секретарĕ те хăйсен парăмĕсене тӳлесе татман. Ял Совет председателĕпе налог агенчĕ укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Районри финанс пайĕн заведующийĕ Свешников юлташ çак ял Советне пынă та нимĕн ĕç тумасăрах каялла кайнă.

Райсовет исполкомĕн председателĕ Малинин юлташ финанс планне çакăн пек тăтăшах тултарса пыманнипе хăнăхса çитнĕ, районри финанс пайĕпе ял Советсен ĕçĕсене тĕрĕслесе пымасть, вĕсене нимĕнле пулăшу та памасть. Районри финанс пайĕн заведующийĕ районра финанс планне тултарас ĕç мĕнле пынипе интересленмест. Чăваш АССР Совнаркомĕ Малинин юлташа хытă ятларĕ. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне учительсемпе медицина работникĕсене ĕçукçи тӳлесе татма хушрĕ. Районри финотдел заведующине Свешников юлташа учительсемпе медицина работникĕсене вăхăтра ĕçукçи тӳлеменшĕн тата III-мĕш квартал планне тултарманшăн суда пама хушса хăварчĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн çак постановленинчен мĕнпур финанс работникĕсен тата ял Совечĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсен тивĕçлĕ вывод тумалла.

Хуçалăх органĕсен руководителĕсен те хăйсен финанс тĕлĕшĕнчи обязательствисене пĕр сăмахсăрах тултарса пымалла.

Финанс планне тултарас тĕлĕшпе малта пыракан Çĕрпӳпе Сĕнтĕрвăрри районĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва пуçласа ячĕç. Çак пахапуçарăва ВКП(б) Обкомĕ ырласа социализмлă ăмăртăва пур финанс органĕсене те хутшăнма сĕнчĕ. ВКП(б) райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен финанс работникĕсене çак ĕçре пур енчен те пулăшса пымалла.

Социализмлă ăмăртăва пуçласа яракан районсем хăйсен обязательствисене тултарма тытăнчĕç те ĕнтĕ. Çав районсенче квартал пуçланнă чухнех финанс работникĕсен, ял Совет председателĕсен канашлăвĕсене туса ирттернĕ. Налог инспекторĕсене тивĕçлĕ кăтартусем панă, вĕсем халĕ налог агенчĕсене ĕçре пулăшса пыраççĕ. Хăйсен парăмĕсене тӳлессинчен пăрăнма тăрăшакансенчен вăйпа шыраса илес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ.

Çавăн пекех Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва Елчĕк, Чкаловски тата Канаш районĕсем те хутшăнчĕç, вĕсем октябрь уйăхĕн малтанхи вунă кунĕ хушшинче кашни 150 пиншер тенкĕ ытла пухнă. Анчах ку пуçламĕшĕ кăна-ха. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла. Ку ĕçе пур финанс работникĕсемпе ялти мĕнпур актива хутшăнтармалла.

Анчах та социализмлă ăмăртăва хутшăнман районсем те пур-ха. Акă, Элĕк, Ишлей, Куславкка, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Советски, Тăвай, Чурачăк тата ытти хăшпĕр районсем те октябрь уйăхĕн малтанхи вунă кунĕ хушшинче 50—60 пиншер тенкĕ çеç пухнă. Çак районсенче канашлусем ирттернĕ те лăпланса ларнă, укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Хăшпĕр районсенче канашлу ирттернĕ хыççăнах работниксене ялсемпе колхозсене кăларса яраççĕ те вара канашлура мĕн çинчен каласса татăлнине пурнăçа кĕртме тытăнаççĕ. Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски тата Муркаш районĕсенчи финанс работникĕсем III-мĕш кварталта шăпах çакăн пек ĕçленĕ ĕнтĕ.

Шупашкар хулинче финанс планне тултарас тĕлĕшпе уйăхлăх ирттерме палăртнă. Хăшпĕр районсенче финанс планне тултарас ĕç мĕнле пынине пăхса тухмашкăн райсовет сессийĕсене ирттерме палăртнă.

Паллах, çак мероприятисем финанс планне тултарас ĕçе нумай пулăшма пултараççĕ. Анчах та кунта вара ĕçе çиелтен мар, тĕплĕн туни кирлĕ. IV-мĕш кварталти финанс планне тултарас тесе, мĕнпур района ура çине тăратмалла.

Октябрьти социализмлă аслă революци 28 çул тултарнине хамăрăн пур обязательствăсене те пурнăçа кĕртнипе кĕтсе илесси пуриншĕн те чи таса тивĕç пулса тăрать. Сăмах патăн—ăна пурнăçа кĕрт. Финанс работникĕсен сăмахĕ сиплĕ вĕçсе каймалла мар, вăл сăмаха государствăн пахаĕçне пурнăçа кĕртнипе çирĕплетмелле.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Çамрăк кадрсене кĕтсе илме хатĕр

Шупашкарти «Кожупряжь» артеле кăçал Çĕрпӳри профтехшкултан вĕренсе тухнă атă-пушмак çĕлекен мастерсем 18 çын ĕçлеме килмелле. Артель правленийĕ çак çĕнĕ кадрсене кĕтсе илме малтанах хатĕрленме тытăнчĕ. Вĕсене валли хальхи общежити юсаса пĕтернĕ, выртса тăма çителĕклĕ таран койкăсемпе матрацсем хатĕрленĕ, общежитие радио кĕртнĕ.

Я. ЯКОВЛЕВ.

А. Н. ОСТРОВСКИЙ ПЬЕСИНЕ ЧĂВАШЛА ЛАРТАÇÇĔ

Искусствăсен Управленийĕ хушнă тăрăх, Л. Агаков писатель вырăссен XIX-мĕш ĕмĕрти чаплă драматургĕ А. Н. Островский çырнă «Мĕн шырама кайтăн—çавна тупса килетĕн» ятлă пьесине чăвашла куçарнă. Ку пьесăна чăвашсен труппи кăçалхи сезонра лартать.

Союзниксен Контроль Совечĕн ларăвĕ

БЕРЛИН, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 10-мĕшĕнче Берлинра Союзниксен Контроль Совечĕн 8-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Кениг генерал председатель пулса ертсе пынă. Ларура Совет Союзĕ енчен—арми генералĕ Соколовский, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем енчен—Эйзенхауэр генерал, Великобритани енчен—Робертсон генерал пулнă.

Контроль Совечĕ иккĕмĕш номер закон йышăннă. Ку закон гитлерла организацисене пĕтерсе лартасси çинчен калать. Вăл çак тĕлĕшпе ку таранччен тунă пур ĕçсене те пĕтĕçтерсе парать.

Законра кăтартнă тăрăх, Гитлер партине тата унпа пĕрле ĕçленĕ пур организацисемпе органсене те, çав парти асăрхаса тăнипе ĕçленĕскерсене, ним юлмиччен пĕтерсе лартмалла, çак шута çурма çар организацийĕсем те кĕреççĕ. Вĕсене пурне те закон хӳтлехĕнчен кăларнă. Çав организацисене çĕнĕрен чĕртсе тăратма е вĕсен ĕлĕкхи ячĕсемпе е çĕнĕ ятсем парса урăхлатса ĕçлеттерме юрамасть.

Çак закон тăрăх пĕтерсе лартнă организацисен мĕнпур пурлăхне, оборудованине, вĕсен фончĕсене тата счечĕсене конфискацилеççĕ. Вĕсене çар командованийĕ конфискацилет.

Закон çумне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартмалли гитлерла организацисен списокне хушса çырнă. Списокра гитлерла 61 организаци ятне асăннă.

АМЕРИКА ХАÇАЧĔСЕНЧЕ ГЕРМАНИ ФАШИСЧĔСЕМПЕ ВĔСЕНЕ ПУЛĂШАКАННИСЕМ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 13-мĕшĕ (ТАСС). «Нью-Йорк Геральд трибюн» хаçатăн корреспонденчĕ Франкфуртран пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ эрнере Германие пĕтĕм тĕнчери расчетсен банкĕн президенчĕ Маккитрик пынă. Вăл Америка чиновникĕсемпе калаçнă. Çавна пула пĕтĕм тĕнчери расчетсен банкĕ малашне мĕнле ĕçлесси пирки питĕ нумай калаçма тытăннă. Корреспондент çапла шутлать: банкăн ĕçне тĕпчесе тĕрĕслеççĕ пулмалла, мĕншĕн тесен вăрçă вăхăтĕнче вăл Германипе финанс операцийĕсем туса пынă. Германи оккупациленĕ çĕршывсенчен илсе тухнă ылттăна йышăннă. Çавăн пекех тата США çав банк çине мĕнле пăхни çинчен тĕрлĕ май калаçаççĕ, мĕншĕн тесен унăн председателĕ пулса Америка банкирĕ ĕçленĕ, вăл Германипе пĕтĕм тĕнчери финанс операцийĕсене пулăшса пынă пулмалла. Çавăн пекех тата çав банк фашистсене вăрçă вăхăтĕнче ытти çĕршывсенче те пулăшса пыман-ши, тесе калаçаççĕ.

«Джермени Тудей» ятлă бюллетеньре çапла çырнă: гитлеровецсен промышленникĕ Рехберг, халь Баварире пурăнакан-скер, нумаях пулмасть çапла каласа панă: «Вашингтонри хăшпĕр çынсем мана «Германи экономикине сăлса хăвармалли» плана туса хатĕрлеме хушрĕç». Бюллетень кăтартнă тăрăх, Рехберг ĕлĕк католиксен партийĕн сылтăмри пайĕпе тата фашистсен шултăра промышленникĕсемпе çыхăнса ĕçленĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсен паллă пуçлăхĕ Лей нумаях та пулмасть Генри Форд патне çыру çырнă. Хăйĕн çырăвĕнче Лей «вăрçă преступникĕсене суд туса пĕтернĕ хыççăн» хăйне ĕçе илме ыйтнă.

НИМĔÇСЕМ МЕКСИКĂРА ФАШИСТЛА ОРГАНИЗАЦИ ТУНĂ

МЕКСИКО, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Мексикăра «Германипе Австри специалисчĕсен союзĕ» ятлă çĕнĕ организаци тунă. Çав организаци демократие хирĕçле ушкăн пулса тăрать. Вăл Совет Союзĕпе Пĕрлешӳллĕ Штатсене хирĕç провокациллĕ ĕçсем туса пырать. Ушкăна Альфред Козлинг, вăлах Альфред Шретер ятлă çын ертсе пырать. Ăна Америка çарĕнчен тарнăскер тесе шутлаççĕ. Шретера Мексикăн концентрациллĕ лагерĕнчен нумаях пулмасть ирĕке кăларнă пулнă.

ГЕРМАНИН ШВЕЙЦАРИРИ ПУРЛĂХĔСЕМ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). США-ри çар ĕçĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен сенат комиссийĕ финанс министерстви представителĕсем каласа панине пичетлесе кăларнă. Ют çĕршыв фончĕсене тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен отделăн руководителĕ Шмидт июлĕн 2-мĕшĕнче çапла каланă: Германи Швейцари банкĕсене мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ хывнине США халĕ те тĕплĕн пĕлмест-ха. 1942 çулта Швейцарире 372 банк пулнă, вĕсем 16 миллиард ытла Швейцари франкĕ тытса тăнă. 1914 çулта 295 банк пулнă, вĕсем 7 миллиард Швейцари франкне яхăн тытнă. Шмидт малалла çапла каланă: çав банксем ют çĕршывсенче миллиардшар доллар укçа тытаççĕ, çав укçана вĕсем ятсăр клиентсен счечĕсем çинче тытса усраççĕ, вăл шутран 500—600 миллион доллара яхăн США-ра тытаççĕ.

Швейцарири законсем тăрăх, уйрăм çынсем банкра хăйсен укçине хăйсен ятне кăтартмасăрах, счетăн номерне кăтартнипех тытса усрама пултараççĕ. Çакна пула Швейцари банкĕсене Германи капиталисчĕсем укçа хывма пултарнă. Шмидт каланă тăрăх, Швейцари правительстви çавăн пек счетсен хуçисене халĕ те тупса пĕтермен-ха. Финанс министрĕ Лэкер каланă тăрăх, Швейцарире нимĕçсен пурлăхне тупса пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсемех туман-ха.

Калаçусем хыççăн Швейцари правительстви Швейцарири компанисемпе банксене Швейцарире хăйсен пурлăхне тытакан нимĕçсен хушамачĕсене пĕлтерме хушнă.

США-ри финанс министерствинче çапла шутлаççĕ: Швейцари правительстви хăйсен пурлăхне Швейцарире тытакан нимĕçсем çинчен кирлĕ сведенисене илнĕ пулмалла, анчах та ун çинчен союзниксене халĕ те пĕлтермен-ха.

ЧЕХОСЛОВАКИН ХАЛĂХ ПУХĂВНЕ СУЙЛАМА КАНДИДАТСЕМ ТĂРАТНИ

ПРАГА, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Прагăри хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Чехири политикăллă партисем—коммунистсен, социал-демократсен, халăх социалисчĕсен партийĕсем тата халăх партийĕ—вăхăтлăх халăх пухăвне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисене хăйсен кандидачĕсен списокĕсене тăратнă. Тĕрлĕ партисем пĕрле каласса татăлнă тăрăх, халăх фрончĕ тăратнă кандидатсен списокĕсене кашни партирен 40-шер кандидат кĕртнĕ, кунсăр пуçне, ĕççыннисен массăллă организацийĕсен 40 кандидатне кĕртнĕ: 10 кандидат—профсоюзсенчен, 8 кандидат—Чехири çĕр ĕçлекенсен союзĕнчен, 2 кандидат—суту-илӳçĕсен тĕп союзĕнчен, 2 кандидат—ремесленниксен тĕп союзĕнчен, 4 кандидат—кооперации тĕп советĕнчен, 3 кандидат—физкультурăн тĕп комитетĕнчен, 3 кандидат—Чехири çамрăксен союзĕнчен, 8 кандидат—культура тĕлĕшпе ĕçлекен пысăк организацисенчен.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, шалти ĕçсен министрĕ Носек вырăнти халăх комитечĕсене халăх пухăвне суйламашкăн суйлавçăсен списокĕсем тума хатĕрленме хушнă. Çакă вăл пурте пĕртан, тӳррĕн тата вăрттăн сасăласа суйлас ĕçри пĕрремĕш утăм пулать. Суйлавçăсен списокĕсене Чехословакин 18 çула çитнĕ мĕнпур гражданĕсене (чехсене, словаксене тата ытти славян халăхĕсен çыннисене) кĕртмелле.

ГРЕЦИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТĂВАС ПИРКИ

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афинăран çапла пĕлтерет: либералсен лидерĕ Софулис паян регентран Дамаскинос архиепископран «çĕнĕ правительствăна монархистсен партине кĕртес марччĕ», тесе ыйтнă.

АФИНЫ, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Регент ĕнер Софулиса йышăннă. Софулис ăна, чи сылтăмри партисемпе ЭАМ представителĕсене кĕртмесĕр, центрти партисен представителĕсенчен кăна тумалли правительствăн списокне кăтартнă. Регент патĕнчен тавăрăнсан, Софулис çапла каласа панă: каласса татăлайман-ха, мĕншĕн тесен регент правительствăна монархистсене кĕрттерессишĕн, тенĕ. Монархистсем вĕсем коалициллĕ правительствăна кĕрестĕн мар, çапла туса вĕсем республиканецсен центрĕ тăрăшнине пĕтерсе лартасшăн.

Политикăллă тĕрлĕ ушкăнсенче çакăн пек шухăшлаççĕ: регент, Софулиса правительство тума хушса, ун умне пурнăçа кĕртме май çук условипе лартнă. Çакна вăл Грецире хальхи вăхăтра «служебнăй» правительствăсăр пуçне урăх нимĕнле правительство та пулма пултарайманнине кăтартса парасшăн пулса тунă. Анчах Софулис юлашки хут калаçнă чухне регенте çапла каланă: «служебнăй» правительствăпа демократиллĕ партисем ниепле те килĕшес çук: çавăн пек правительство туса хурсан ăна демократсем йышăнмаççĕ, вĕсем вара халăха чĕнсе калĕç, тенĕ. Регент каярахпа татăклă ответ парассине кĕтеççĕ.

Демонстрацисем тума чарнă пулин те, монархистсем октябрĕн 12-мĕшĕнче демонстраци тунă. Демонстрацире 6 пин çынтан ытла пулман. Демонстрантсем Вулгарис правительствине хăварма е çавăн йышши çĕнĕ правительство тума ыйтнă. Монархистсем çавăн пек правительствăна хăйсемшĕн чи усăллă правительство тесе шутлаççĕ, мĕншĕн тесен ун пек правительство монархистсене государство аппарачĕне çара хăйсен аллинче тытса тăма тата хăйсен планне пĕр чăрмавсăр пурнăçа кĕртсе пыма май парать. Çавăн пек правительство тусассăн, «партиллĕ мар» правительствăн ĕçĕсем экономикăпа политикăн тĕрлĕ облаçĕсенче хăмаршăн монархистсем нимĕнле ответ та тытман пулĕччĕç.

НОРВЕГИ СТОРТИНГНЕ КАМА СУЙЛАНĂ

ОСЛО, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 9-мĕшĕнче Норвеги стортингне суйланă чух панă сасăсене шутласа пĕтернĕ. Стортинга мĕн пурĕ 150 депутат суйланă. Вĕсем çак партисенчен (скобкăра 1936 çулхи суйлавра çав партисен миçе депутат пулнине кăтартнă): сылтăмрисен «Хейре» ятлă партийĕ—25 депутат (36), либералсен «Венстре» ятлă партийĕ—21 депутат (23), рабочисен партийĕ—74 депутат (70), хресченсен партийĕ—10 депутат (18), коммунистсен партийĕ—13 (0), христиансен халăх партийĕ—7 депутат (2).

Ку суйлавра 1.433.761 суйлавçă сасăланă, вăл 89,6 процент пулать. 1936 çулхи суйлавра 1.455.238 суйлавçă сасăланă пулнă, вăл 84 процент пулнă.

АНГЛИРИ НАУКА РАБОТНИКĔСЕН КАНАШЛĂВĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Пресс Ассошиэйшен агентстви корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 10-мĕшĕнче Лондонра наука работникĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Унта Блэкет профессор 1945 çулхи июнь уйăхĕнче Совет Союзĕнче пулнă Англи ученăйĕсен ячĕпе çапла каланă: «Совет Союзĕнче Англи ученăйĕсене лайăх йышăнчĕç. Эпĕ вырăс ученăйĕсене сывăх вăхăтрах тав тума пултарасса шанса тăратăп».

Лондонри университетри зоологи профессорĕ Лопсон, Совет Союзне Англи ученăйĕсен пĕр ушкăнне ертсе килнĕскер, «çав аслă çĕршывпа тачăрах çыхăну тытма кирлине» палăртнă.

Совет Союзĕнче пулнă Вустер доктор: Совет Союзĕнчи ученăйсем питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, тенĕ. «Совет Союзĕнчи ялхуçалăх наукине тĕнчери чи малта пыракан наука пулса тăрать», тенĕ вăл.

ЛОНДОНРА ОФИЦИАЛЬНĂЙ ÇЫНСЕМ МИХАЙЛОВИЧА СОЮЗНИКСЕМ ПУЛĂШСА ТĂРАÇÇĔ ТЕНĔ СĂМАХА СИРСЕ ЯНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин обозревателĕ Памела Мэтьюз çапла пĕлтерет: паян касхине Лондонра официальнăй çынсем—Германипе Драже Михайлович ертсе пыракан югославсен çарĕ пурри çинчен калани тĕрĕс мар, тесе пĕлтернĕ.

ЯПОНИЕ ТАВАРСЕМ ИЛСЕ ПЫМА ЧАРНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви корреспонденчĕ Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, Макартур генерал Японие таварсем илсе пыма чарнă. Унта Японире туман, анчах халăха кирлĕ таварсене çеç илсе пыма юрать.

НАНКИНРА ПУЛНĂ ПУКАНЕЛЛЕ ПРАВИТЕЛЬСТВĂН ЧЛЕНĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПНĂ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: Иокогама хулинче Америка çарĕсем хăй вăхăтĕнче японецсем туса хунă Китайри пуканелле правительствăн 9 членне тытса хупнă.

ВЕРХОВНЫЙ СУД КВИСЛИНГ ПАНĂ КАССАЦИ ЖАЛОБИНЕ ЙЫШĂНМАН

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Норвегири телеграф бюровĕн пĕлтерĕвне парать: Норвегин Верховнăй сучĕ паян Квислинг панă кассаци жалобине йышăнман. Квислинга жалобине Норвеги королĕ пăхса тухмалла.

ЛАВАЛЬ ĔÇНЕ УРĂХ ПĂХСА ТУХМАÇÇĔ

ПАРИЖ, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Францире официальнăй çынсем каланă тăрăх, Лаваль ĕçне урăх пăхса тухмаççĕ, мĕншĕн тесен ăна закон тăрăх суд тунă. Франци суд законĕ тăрăх, айăпланакан суд ларăвĕсенче пулма килĕшмен чухне те суд ĕçе пăхса тухма пултарать. Лаваль хăйĕн адвокачĕсем урлă юстици министрĕнчен ĕçе вăхăтлăха чарса лартма ыйтнă. Юстици министрĕ адвокатсене йышăннă, анчах вĕсем урлăх вăл Лавалĕ суд ĕçне вăхăтлăха та чарма май килменни çинчен пĕлтернĕ.

ЛАВАЛЬ ЗАЩИТНИКĔСЕМ ДЕ ГОЛЛЬ ПАТНЕ ПЫНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Парижран çапла пĕлтерет: Лаваль защитникĕсем де Голль генерал патне пынă. Вĕсем де Голльрен Лавале тепĕр хут суд тума ыйтнă. Жаффере, Но тата Барадюк адвокатсем каланине де Голль сехет çурă хушши ним шарламасăр итлесе ларнă. Вĕсем каласа пĕтерсен, де Голль питĕ чиперрĕн çапла ыйтнă: «Йăлтах каласа пĕтертĕр-и, господинсем?» тенĕ, вара вĕсемпе сывпуллашнă та тухса кайнă.

МАРСЕЛЬРИ СОЦИАЛИСТСЕН ОРГАНИЗАЦИЙĔ ИКĔ ПАЯ УЙРĂЛСА КАЙНĂ

ПАРИЖ, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Марсельрен илнĕ хыпарсем тăрăх, Марсельри социалистсен организацийĕ икĕ пая уйрăлса кайнă. Уйрăлнă пайĕ октябрĕн 23-мĕшĕнче суйламалли учредительнăй ассамблейăна суйламашкăн хăйĕн кандидачĕсен списокне тăратнă. Çапла ĕнтĕ, суйлавра социалистсен икĕ список пулать. Полици социалистсен партийĕн комитечĕн суртне партирен уйрăлса кайнă социалистсем тытса илесрен сыхласа тăрать. Октябрĕн 6-мĕшĕнче касхине çав социалистсем çапах та вăл çуртăн пĕр пайне йышăннă, анчах вĕсене тепĕр кунне унтан хăваласа кăларнă.

ПОЛЬШĂРА ĔÇ ПОВИННОÇĔ ТĂВАССИ ÇИНЧЕН ДЕКРЕТ КĂЛАРНĂ

ВАРШАВА, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Варшавăри радио пĕлтернĕ тăрăх, Польша Халăх Совечĕн Президиумĕ обязательнăй ĕç повинноçĕ çинчен министрсен совечĕ йышăннă декрета çирĕплетнĕ. Çав декрет тăрăх, 18 çултан пуçласа 55 çула çитнĕ арçынсен тата 18 çултан пуçласа 45 çула çитнĕ хĕрарăмсен ĕç управленине пырса çырăнмалла. Польша Халăх Совечĕн депутачĕсене, çар çыннисене, судьясене, адвокатсене, государствăпа самоуправлени служащийĕсене, духовенствăна, профессорсемпе педагогсене, хресченсемпе ялхуçалăх рабочийĕсене ĕç повинноçĕнчен хăтараççĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-[illegible], ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабсельхорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-[illegible].

НТ 02124 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК [illegible] Заказ № 2. ф. 6. 53 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.